Чебоксарская
Б. Б. [illegible]

Пĕр №-рĕ 10 пус 19-мĕш сул тухăт Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 16 ПЯТНИЦА 262 (4774)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кăнтур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Информацилĕ пĕлтерӳ

Нойабĕрĕн 13—14-мĕшĕсенче Парти Обкомĕн Пленумĕ пулса иртнĕ.

Пленум çак шăтусене сӳтсе-явнă: 1) ПСК(б)П Обком секретарĕ С. П. Петров çинчен тата 2) финанс ĕçĕ çинчен.

Пленум С. П. Петрова Обкомăн пĕрремĕш секретарĕнчен хăтарнă тата ПСК(б)П Обком буровĕпе пленум составĕнчен кăларнă. Пленум Ăа. А. Андрейева (ПСК(б)П Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнăскере) ПСК(б)П Обком членĕн кандидатĕнчен кăларнă тата парти ретĕнчен кăларнă. Çавăн пекех тата Пленум П. И. Иванова Обком буровĕнчен кăларнă тата „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакторĕнчен хăтарнă.

Пленум ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарне Г. И. Иванов ăуталташа, иккĕмĕш секретарне И. В. Дубов ăуталташа суйланă.

Пленум решенисене пурнăçа болъшевикла кĕртсе пырар

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленумĕ икĕ шăту сӳтсе-явса татса хăварнă: Парти Обком секретарĕ С. П. Петров çинчен тата финанс çинчен.

Петров çинчен тăракан шăтăва тĕплĕн пăхса тухнă хыççăн, пленум çапла тесе шутларĕ: Петров ăуталташ хăй буржуазла-национализемпе сыхăнса кайнă, çавăнпа та вăл, паллах, Парти Тĕпкомĕн февраль-мартри пленум решенисене тата пленумра Сталин ăуталташ кăтартса панисене пурнăçа кĕртессишĕн болъшевикла кĕрешӳ илсе пыма пултарайман. Петров ăуталташ халĕ партирен кăларса пăрахнă Никитин, Токсин тата ытти ăнтăçсăр-не çыхăнса

Суйлав кампанинче ĕçлемен парторганизаци çинчен

Декабрĕн 12-мĕшĕ сывхарса килет. Ку кун пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕçхалăхĕн ССР Союзĕн Аслă Советне совет сĕвнăвĕн чи лайăх, партипе правительствă ĕçĕмен пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешме пултаракан çынсене суйламала. Çавăнпа та парторганизацисен суйлав кунне тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ. Халăх вăхăтра нимрен ытла суйлав участкисенче агитацине пропаганă ĕçне кирлĕ пек лайăх организацилеме. Суйлав кунĕ тĕлне Аслă Совета суйламали Положенине пĕлменни пĕр çын та пулмала мар.

Анчах хăшпĕр парторганизацисем суйлав кампани çинчен пăкăлтатнинех вăхăта иртерĕççĕ. Ака, Шупашкарти кооптехникумри парторганизацине илсе пăхăр. Парторг заместителĕ Мишин йăлтăш: „Ĕлĕп 13 мĕш номĕрле суйлав участкинче ĕçлеме 9 агитатăр уйăрнă. Вĕсем Ярославски урамри килхуçи арăмсене суйлав саккунне ăнлантарса парăççĕ. Кунсăр пуçне йăлсенче 20 агитатăр, Шупашкарта Канаш хушшинчи чукунçул çинче 4 агитатăр ĕçлеççĕ", тет. Парторганизаци ĕçне тĕрĕслесе тухнă хыççăн, урăхла картăн курăнать. 9 агитатăртан 7 агитатăр суйлав саккунне вĕрентĕ йăтне туса. Солнцев агитатăр Ярославски урамĕнчи Светлайев йăлтăш хватерĕнче 4 хут пулнă та, çĕнĕ суйлав саккунне вĕрентсе пĕтернĕ, тесе лапланă. Хăй пурĕ те вĕсĕ çынна кăна вĕрентнĕ. Никифоров агитатăр çĕнĕ суйлав саккунне пĕр сехет çурă хушшинче «вĕренсе пĕтернĕ». Вал çавах: „Ещĕ вăсĕ заçăти иртнĕ, çĕнĕ суйлав саккунне пĕтемпех вĕренсе тухнă", тет. Çавăнпа та вăл вĕрен кенсен хушамăçсене те пĕлмест. Клушина агитатăр миçе заçăти ир ĕренине те тĕплĕн астăваймасть. „Те 4 заçăти иртнĕ, те 5-ĕ тет вăл.

Вĕренӳ пахалăхĕ çинчен калаçмали те çук. Кун çинчен Ярославски урамĕнчи килхуçи арăмсем лайăх калаçа парăççĕ.

— Кооп-хикумри агитатăрсем суйлав саккунне ăнлантарма пирĕн пата хватерех пычĕç. Ку пите лайăх. Анчах вĕсем пĕр сехет çурă хушшинче вĕрентĕне хыççăн: „Суйлав саккунне вĕренсе пĕтертĕмĕр ĕнтĕ", терĕç те, урăх килсе те курăмарĕç. Епĕр суйлав саккунне ăнланса йăламарăмăр. Суйлав кунĕ тĕлне Сталинла Конституцине çĕнĕ суйлав саккунне вĕренсех тухасчĕ пирĕн, тесçĕ вĕсем.

Ку агитатăрсемпе вĕренӳ пахалăхĕ çинчен мĕн ыйтмали пур? Вĕсем хăсан те суйлав саккуне тĕплĕн пĕлмеççĕ. Парторганизаци вĕсене йăвăшĕн кăна уйăрнă. Вĕсене ĕçре пулăшман, вĕрентмен. Агитатăрсемпе семинар, канашлу иртермен. Парторг заместителĕ Мишин хăй суйлав участкине туса курман. Çавăнпа та вăл кружокселе миçе çын вереннине те каласа пама пултарайман-ĕçт.

— Парторг пирĕне каласмаçт, епĕр мĕнле ĕçлени çинчен те ыйтса пĕлмест,—тет Никифоров агитатăр.

Килхуçи арăмĕсем хушшинче тата хутла вуçах пĕлменнисем пур. Суйлав кунĕ тĕлне хутпĕлменнисене пĕтересси çинчен парторганизатăр шутламан. Мишин йăлтăш хăйне хăй: „пирĕн участкăра хутла сахал пĕлекенсем 4 çын, хутла вуçех пĕлменнисем пĕр çын та çук", тесе лапланатрать. Участкăри суйлав комиçси секретарĕ Иванов йăлтăш: „хутла пĕлменнисем 6 çын", тесе спрăвкă парать. Ку та тĕрĕс мар. Хутла пĕлменисем кунта 6 çын ç-ç мар, ытларах. Анчах палла, ку хутла пĕлмен-суйлавçасене никам та вĕрентмест.

Парторганизацисен суйлав саккунне ăнлантарнине пĕрлех суйлавçасен сăн пичĕсене те тĕплĕн пĕлмелех. Кунта-апла мар. Нойабĕрĕн 12 мĕшĕнче суйлавçасен списокисене витринă çине çапса хуçала пулнă. Кооптехникумри суйлав участкинче ку витринă çукта, суйлавçасен списокине те хатĕрлесе çитермен. Списокăра суйлавçасен йăвăçене, хушамăçене, т. ыт. пăтратса пĕтернĕ. Сăмахран, Байбăршшев выраине Байбăшев, Будников выраине Бубников, Йушков выраине Шчеглева тата ыт. те. Хăшпĕрин йăвăç пур, хушамачĕ çук, çуралнă кунĕ пур, хăш çул çурални палла мар. П. А. Тимофейев гаҫханах вилнĕ, Ĕлле семĕн пĕр уйăха йăхăн ĕнтĕ урăх хулана куçса кайнă, вĕсем списокăра шутланса тăраççĕ. Тата халăх тăшманĕсене списока кӳртсе пĕтерĕ. Çав вăхăтрах суйлама, суйланма та пултаракан çынсене списокăна кӳртмессер хăварнă. Малтанхи списокăра пединститутри общчежитине пурăнакан студентсене 300 çынна йăхăн кӳртмен. Ку йăнăша кăтартнă хыççăн, списокăна тепĕр хут тĕрĕслесе тухнă. Анчах тĕрĕленĕ хыççăн списокăна каллех кооптехникумра пурăнакан студентсене, преподавательсене, служăщăсене 200 çынна йăхăн суйлав списокине кӳртмессер хăварнă. Çак фактсем пурте парторганизаци кун çумĕнче пулса пынă. Халĕ суйлав участкисенче суйлавçасен списокисене витринăсем çине çапса тухнă, кооптехникумри суйлав участкинче халĕ списокăсене тĕрĕслеме çук тытăнман.

И. Перлов.

Епĕ вăтам пĕлӳ илеспĕн

Епĕ 1908 çулта çуралнă. Çамрăк чухне вĕренес ĕмĕт питĕ. пысăкчĕ. Анчах та аттесем чухăн пурăннине тата сул вĕренмĕ хыççăн малăла вĕренме кайаймарăм. Килте ĕлекен çурăнине 8 çула ситенех ăсхăнуç-хыççăн тума пуçламăр. Вăйран вăйса тăрăшса ĕçлесен те ниçĕ пусăлă ӳĕра çухăнуçне ĕçленине тăрăса пурăнмалăх тăрă пулмасчĕ. Çиме ситменнине аттене йăлсем тăрăх вĕрен ăнса çӳресе тăрăнса пурăнаттăмăр. Нумай сул хушши йăт выляçленчĕ ĕçлесе çӳрерĕм, çимăх ыйта тă пурăнăç кураймарăм.

1931 çулта тăвăн йăла тавăрăлăм. Вăл сул йăлта колхоз организацилеччĕ. Колхоза кĕтĕм. Тăрăпса ĕçлерĕм. Манăн ĕçленĕ хушăра та вĕренес шухăш пысран тухмасĕç. Йăлапах хăçан-хăçан ĕçлеме çӳренĕ. Ăна

Малта пыракан колхозсем

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем Канаша Шупашкар хушшинчи чукунçула вăхăтра туса пĕтересшĕн çине тăрса ĕлесе пыраççĕ. Упрăмăнах Упакасовăн „Трактор" колхоз лайăх тĕслĕхпе пынаратъ. Ку колхозпа строительстваш пуçланăранпах стройăкра лапăлансем 3 сыр, çурăнисем 10 сын пĕр татăмласăр-ĕçлеççĕ. Вĕсем Октябăр уйăвĕ умĕнче специалисĕмла ăмăртăва хутшăнса ĕçлеме тытăнçан строительстваш ĕçне ытти колхозниксем те хутшăнчĕç. Çапла хăйсем çине илнĕ обязательствăна октябĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 125 процент тунатарчĕç. Кун хыççăн колхозниксем: епĕр Шупашкара пĕрремĕш пойăс киличченех чукунçуна çине ĕçлетĕр, тесе строительстваш ĕçлеме йышăнç.

Ерне упрăмăнах Петрова, А. Филиппов, Чулкова, А. Малышева тата Степанов колхозникĕсем пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна йаланах 120 процентран кайа мар тултараççĕ.

Çавăн пекех Сĕнчĕрт йăлăнчи колхоз та хăйĕн обязательствине, октябĕрĕн 25-мĕн тĕлне тултарнă. Ку колхозри колхозниксем те обязательстваша пурнăçа кĕртнине лăпланса парман. Ку колхозпан хальĕ те чукунçуна çинче çурăннисем 5 сын, лапăлисем 4 сын ĕçлеççĕ. Молотов, А. Знаковăн колхозниксем строительстваш пуçланнăранпах чукунçуна çинче ĕçлеççĕ.

Тупай Есмĕлĕнчи „Красная Чувашия" колхоз та малта пыракан колхозсен хисепĕнче тăрать. Ку колхозăн 800 кубла метр çĕр чавса купаламала пулнă. Осинов йĕртсе пыракан бригадă тăрăшса ĕçленипе планна çентăбĕр уйăхĕнче 115 процент тултарнă. Халĕ çурăннисем 10 сын, лапăлисем 4 сын ĕçлеççĕ. Вĕсенчен Белебеевцова, Кайăков, Степанова, Захаров т. ыт. те стахановла ĕçлесе пыраççĕ.

В. Васильйев.

Учот ĕçĕ çук

Чукунçуна строительствин виççĕмĕш участкинче учот ĕçне йăпăхтарса йанă. Маттăрсем кулленех колхозниксем мĕнле ĕçленине шута илсе пымаççĕ. 86-мĕш километрти труба патĕнче ĕçлекен маттăр Кучков нарăдсем вăхăтра çырса памаст. Çавăнпа колхозниксем хăйсем мĕнле ĕçленине тĕлмеççĕ. Кунашкал пулни ĕçе пысăк сиплен кĕрет, ĕçлекенсем хушшинче хирĕç кăларса йаратъ. Анчах маттăрсем ăна шута илмеççĕ.

Маттăрсен ĕçлекенсем хушшинче пулмала, ĕçлекенсене ĕç тата ытти ыйтусем тăрăх та йăнăлтарса памала. Кучков ун пек тумаст вара. Вăл ĕçлекенсемпе калаçасшăн та мар. Йăтаçса вăрçса кăна сĕрет.

Чукунçуна строительствин управленийĕ маттăрсем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕлтетес ыйту. Çине хыттăн çăвăрăнса пăхмала. Пире кулленех пулăшса, вĕрентесе пыракан маттăрсем кирлĕ.

А. Шорников.

Сĕт-çу хапрăнĕ

ЙĔПРЕÇ. „Çиçĕм" колхозра йăл çумĕпе йухса выртакан „Куштавăл" çырма хĕррине колхоз сĕт-çу ферми лартнă.

Ферма 1931 çулта организацине. Пирвайăх ферма питех те чухăн пулнă. Анисем ăратсăрисем, сĕт тухăçĕ начар пулнă.

Çака 4—5 çул хушшинче ферман сăн-сăпаçне палламала мар улшăнчĕ. Ене ферми сĕт-çу фабрикĕ пулса тăчĕ. Фермăра ăратлă та тĕрекле, пысăк тухăçлă ĕнесем çӳсе çитĕнчĕç. Ферма пуçлăхĕ Федоров тата ĕне пăхакансем Р. Иванова, Д. Кандăкова йулташсем тăрăшса ĕçленине ферма районра кăтартулă ĕçлекен фермăсен шутне тăчĕ. 1931 ç. фермăра 67 ĕне ăратсăрисем пулнă пулсан, кăçал, 111 ĕнене çитнĕ. Вĕсенчен 98 процентĕ „Краснокорбатски" текен ăратлă ĕнесем.

Ферма ӳссе тĕрекленчĕ. Ферма çултан çул колхоза пысăк тулăш парат. 1932 ç. кашни ĕне вăтам шутпа 8—9 литр сĕт панă. 1937 ç. „Маруся" ятлă ĕне талăкра 18 литр, „Пестряна"—17 литр параççĕ. Çак ĕнесене фермăри пăлăх стахановкă Дашă Кандăкова пăхать. Йăратать вăл фермăра ĕçлеме. Ф-рмăра 4—5 çул пĕр татăлмасăр ĕçлет.

Вăл елĕк патша тискер саманинче ыра пурăнăç курăйман. Халĕ вăл чысла, хисеплĕ вырăнта. 1926 ç. Дашă Кандăкова фермăра матур ĕçленипе Горьки хулинче пулса иртнĕ колхозник-ударниксен сиезĕнче пулнă. Унта вăл Совет Союзĕн старăстине М. И. Калинин йулташпа курса калаçнă. Калинин йултташа вăл тĕрлесе çеленĕ кĕпене парнеленĕ. Елĕк пулсан Дашă Кандăкова çакăн пек чыса çинчен шухăшлама та пултарайман.

Дашă кăçал фермăра ĕçлесе 382 ĕçкунĕ тунă. Унăн вăл 178 пат таса тĕш тыра илет. Елĕкки вăхăтра çакăн чухлĕ тырра Дашă пĕччен мар, унăн çеммăн те илме пултарайман.

— Патша саккунĕ хĕрарăма çын вырăнне шутламан. Хĕрарăмăн çĕр те пулман. А, халĕ ĕнĕ пĕччен 178 пат тырă илетĕн. Çакă телейлĕ пурнăçа Сталин ятне тăрăшшинне çеç курма пултартăмăр,—тет Дашă.

Райа Иванова та матур ĕçлет. Стахановкă шутĕнче тăрать. Райа Иванова кăçал 354 ĕçкунĕ тунă. Унăн вăл 165 пат таса тĕш тыра илет.

— Мĕншĕн савăнас мар-ха. Пурнăç пуйăланăнчĕ, кулăтурланчĕ. Сталин ятне пире пуйăн пурнăç пачĕ. Хĕрарăма çутă çул çине кăларчĕ. Пайăн епĕ сĕт çу фабрикĕнче ĕçлетĕп. Çакă вăл маншăн пысăк савăнăç, пысăк телей. Кăçал епĕ çĕвĕ çĕлемели машинă туйанатăп, лайăх тумланатăп. Хамăн политикăла пĕлӳйăже ӳстерме хăçатсем тата журнал сыранса илетĕп,—тет Райа Ивановă.

Райа Иванова çемйи—стахановла çемйе. Кăçал вăсем 762 пат таса тĕш тыра тата 402 пат пахча-çимĕç илеççĕ.

Ферма ӳссе тĕрекленсе пынă май, колхозниксен киленĕве выльăх-чĕрлĕх усрасси те ӳссех пырать. Енесĕр колхозник çук пайăн. Ферма кашни колхознике ĕнелĕ тунă. Колхозниксем хăйсен ĕнисене ферма урлă лайăлатнă.

Çапла вара „Çиçĕм" колхозри ĕне ферми чăн-чăн сĕт-çу фабрикĕ пулса тăчĕ.

Д. Михайлов.
Г. Марушев.

Чăваш АСС Республик Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн нойабĕрĕн 10-шне кĕрхи çĕртме сухалассине мĕнлĕ пынине кăтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	План (гектарпа)	Плана тултарнă (процентпа)	Вăй шутран трактор семене сухалас плана тултарни (гр. центнерпа)
Улатăр	10700	89,6	90,9
Елĕк	16000	81,6	51,9
Патăрьел	16500	70,2	91,3
Вăрнар	17000	77,6	105,3
Йĕпрес	12500	92,3	74,7
Ишлей	18000	100,5	90,1
Канаш	11000	74,2	76,9
Куславкка	12000	103,4	60,1
Куракино	11000	119,2	116,5
Хĕрлĕ Чутай	11000	71,8	—
Сĕнтĕрвăрри	12500	60,1	—
Пăрачкав	14600	90,2	100,1
Турхан	9000	80,9	—
Тутаркас	15000	104,9	112,8
Трак	14000	90,3	67,2
Вăрмар	18000	81,8	76,4
Сĕрĕç	18480	89,4	62,8
Шупашкар	12000	75,0	68,1
Шăмăршă	9000	63,9	—
Шăхасан	15000	86,5	83,8
Шăнкăртам	8500	99,2	—
Çĕмĕрле	7500	82,9	—
Йĕтĕрне	14170	84,5	—
Йĕлчĕк	18000	94,0	90,7
Тăвай	12000	95,1	118,4
ЧАССР-пе ...	328600	87,9	84,6

Асăрхаттарни: Вăрнар, Ишлей, Куславкка, Тутаркас, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Тăвай районĕсенчи цифрсене нойабĕрĕн 5-шне илнĕ.

„Дипмо" колхозри (Куславкка р.) пулăх çурчĕн пуçлăхĕ М. Захаров йулташ. Вăл çак уйăхра 18 çул тултарса Асăлă Совета суйламалли права илет.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Суйлавçăсен списокне хатĕрлерĕç

Мăн Шетмĕ йăлсоветĕнче (Трак р-нĕ) суйлавçăсен списокне туса çитерчĕç. Йăлсоветне керекен 8 йăлта суйлавçăсем 1178 çын шутланаççĕ. Суйлавçăсен списокне тунă чухне кашни суйлавçăнах суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса пачĕç. Кунсăр пуçне суйлавçăсем суйлав саккунне кружоксенче тĕн ăсен вĕренеççĕ.

И. Сергейев.

Мишаков бригади малта

ВĂРНАР. Машинăпа трактор станцинчи трактор бригадисем Октябĕрти Социалисмăла Асăлă революцин умĕнхи социалисмăла ăмăртура пысăк хастарăхпа ĕçлерĕç.

Ăмăртура Мишаков бригади пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Унăн бригади кашни трактор пуçне вăтамран 1150 гектар сухалана. Иккĕмĕш вырăнта Храмкин бригади. Унăн бригади кашни трактор пуçне вăтамран 1130 гектар сухалана.

Ст. Уланга й.

Варасăрти (Куславкка р.) колхозăн 4-мĕш бригадăн бригадирĕ П. Р. Романов йулташ. Вăл сăнав участкинчи кашни гектартан 24-шер центнер çурхи тулă туса илнĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Чăваш халăхĕн социалисăмла культурин ӳсĕмĕ

Чăваш халăхĕн иртнĕ ĕмĕрхи куçуръĕсем йăвăр та асапла. Помещиксемпе капиталистсем стройĕ халăх çурăмĕ çинче тискер арман чуйĕ пек выртнă. Вырăс, тĕтĕмăк, трактор тата ытти усăллирсем ĕççишнине ĕмĕртон-ĕмĕр кайласа пынă. Чăваш йăлăсем тĕрĕлĕп ӳша çырми, Хура вар тĕнĕсĕне пырăсай. Хура пӳртсенче тĕтĕмпе пăчăхнă ача йăнăшши итленĕ. Кĕлехи вăрăм кăçсенче çак хура пӳртре хăйччăки çинче çӳхе хăйă мĕскĕн çулăмпа йалкăшса сунăç.

Халăх асапланнă. Халăх ĕмĕтленĕ. Халăх кĕтнĕ, хатĕрленнĕ. Пирĕн халăх хăй çурăмĕ çинчи йăвăр чула çăва тĕнелле сирпĕтерсе йăрас тесе, пĕрре мар çĕкленĕ. Асăлă Социалисăмла Октябрь революцин çеç мĕн пур халăхсене ура çине тăратрĕ, помещиксемсе капиталистсене стройне пирĕн çĕршывра ĕмĕрăсех çапса аркатрĕ. Вырăс пролетариачĕ пуçăннине пирĕн чăваш халăхĕ çĕнĕрен çурăлма пек хăватлăн ӳсе çитĕнчĕ.

Республикăна, ĕлĕкхине танăштарсан, паллама çук. Куллен сарăлса, вăйланса пырат экономикă пуйăланать, клеменет чăваш халăхĕн пурнăçĕ, йăмăкри утăмсемпе çулсерен ӳссе пырат культурă.

Ес хаваслăх, ĕç пултарулăхĕ çĕкленĕсси ĕççыпинсен пурнăçĕ лайăхланса пыннинчен килет. Рабочисемпе служăщăисен ĕçăкри çулсерен ӳсе ес пырат. Колхозра тăракан ĕçхресченĕсем ĕçкунĕ çуран-çук ытларах туртакан пулса пырат. Тавар хакĕсем çӳкеççĕ. Кунсăр пуçне, государствăна ĕççыпинсене культурăпа йăла условисене лайăхлатма çĕнĕрен çĕнĕ шкулсем, больницăсем, клубсем, библиотекăсем, театрсем, ача сачĕсемпе ăçасисем уçса парса пулăшат.

Пирĕн республикăри, рабочисемпе служăщăисен ĕçăкри ӳссе пынине илсен, çака курăнат. 1928 çулта ăçши рабочи ĕç служăщи çулталăкне вăтамран ĕçлеççĕ 505 тенкĕ илнĕ пулсан, 1936 çулта ăçа 2.158 тенкĕ илнĕ. Ĕç урăхла ку —4.3 хут ӳсни пулат.

1928 çулта государствăн халăха çутта кăларасс ĕçе 2.848.600 тенкĕ хывнă, 1936 çулта ку çитăва тăрăх расхут 19 хут ытларах ӳснĕ. Государствă 1936 çулта халăха çутта кăларасс ĕçе 50.551.500 тенкĕ хывнă.

Çулăмсăр пысăлăх сыхлас ĕçе 1928 çулта 951.200 тенкĕ хывнă, 1936 çулта ку расхут 12.625.200 тенкĕ çитничен ӳснĕ.

Шкулсем. Елĕкки патша вăхăтĕнче, 1914 çулта, Чăваш хушшинчи шкулсенче 29.786 ача вĕренĕ, пирĕн совет саманинче, унчухнехинне танаштарсан, 1936—37 вĕренӳ çулĕнче шкул ачисен йышăнă 6 хут ытларах ӳснĕ. Пĕтĕмĕшне иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн шкулсенче 176.338 ача вĕренĕ, кăçалхи çул ну цифăр çумне çĕнĕрен 20.000 ача хӳтăннă.

Ӳрăмах тĕлĕнмеле картинă тухса тăрат пирĕн умма вăтам шкулсемпе асăлă шкулсене илсе пăхсан. 1914 çулта чăваш хушшинчи пур пек вăтам шкулсенче 1.469 ача вĕренĕ, 1936—37 вĕренӳ çулĕнче ку цифăр 37.510 ачана çитнĕ, урăхла калаçсан, вăл 25 хут ӳснĕ пулăт. Специалисем хатĕрлекен вăтам шкулсенче пирĕн республикăра 1936—37 çулта 6.106 студент вĕренĕ, çавнашкал шкулсенчех ĕлĕк 1914 çулта пĕтĕмĕше те 140 ача çеç пулнă. Ку тĕлĕнше вара епĕр 43 хут ытларах ӳснĕ.

Елĕкки вăхăтра çитĕнмесĕр шкулăсем пуллăн, 1936—37 çулта республикăра çитĕнмесĕр шкулĕнче 1670 çын вĕренĕ.

Асăлă шкулсем çинчен чăваш халăхĕ ăçĕк сĕмлемпе то пултарайман, Республикăри асăлă шкулсенче 1936—37 вĕренӳ çулĕнче 1.132 çын вĕренĕ, кăçал 2.000 çынна йăхăн вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне, чăваш ĕççăмрăксемсен шкулсенче Мускаври, Ленинградри, Горькинри, Хусанти асăлă шкулсенче нумай вĕренеççĕ.

Республикăра халĕ 632 пуçламăш шкул, 332 тулăмар вăтам шкул, 71 вăтам шкул, 27 техникум, 2 рабфак, 4 асăлă шкул ĕçлет.

Колхозсенче, рабочисен поселокĕсенче çĕнĕрен-çĕнĕ клубсем уçăлаççĕ.

1914 çулта чăваш хушшинче хушшинче пĕтĕмпе 2 клуб пулнă, вĕсем те пулни кулăра, халăхи вăхăтра республикăра 625 клуб ĕçлет, вĕсенчен 594-шĕ йăлти клубсем. Библиотекăсене илсен, вĕсем 1914 çулта 5 пулнă, халĕ 615.

Патша вăхăтĕнче пуп-кĕнекисĕр ӳçĕпе, чăваллă сырнă кĕнеке-хăçат, пулман. Халĕ республикăра 9 çăхпăл, 39 хăçат тухса тăрат. Чăвашсен государственă издательстви ура темиçе пиннĕн тăрăшса чăваш кĕнеки тухса тăрат.

Халĕ пирĕн, чăваш халăхĕн, хамăрăн инженерсем, учительсем, агрономсем, врачсем, учăнăксем, писательсем, искусствă работникĕсем пур.

Ӳсеррĕ, хăйăхланаççĕ больницăсем, аванăнса сурчĕсем. Республикăра халĕ 49 больницă, 97 фольдшăр пункчĕ, 687 трахом пункчĕ, 20 консультаци, ача сурчăмали сурчĕсем 39, ача сачĕсемпе ăçасисем 580.

Совет государствин пире, чăваш халăхне, пирĕн ĕмĕрхи инженер—трахомăран хăтăлма пулăшрĕ. Çак çулсенче епĕр трахомăн йăлашшĕсенче тĕнĕ-йĕрĕнех пĕтерттĕр.

Елĕк хура пĕрт ларнă сĕрте пайан колхозникĕн чапла сурчĕ ларат. Ун ăшĕнче—тулли пурнăç. Елĕк хăйă-çунăпа сĕрте пайан Илйич лампăкки çунат. Елĕк ирĕр чаи часси йăпранă сĕрте, пайан колхозникĕсен хавасăлă та сĕкленӳлĕ йăрăсем йăпăрççĕ.

Халăх йăрлат. Халăх çакă телейлĕ те тулли пурнăçшăн Асăлă Октябрь революцине, асăлă пăрăс пролетариатне, пĕтĕм халăх çулпуçне Сталин йăтташа тав тăват. Пирĕн чăваш халăхĕ пĕтĕм сĕр чăмăрĕ çинчи прогрессивлă етемлĕхпе пĕрле коммунизм патне паттăрăн утат.

Ĕçлесе илнĕ тырра ампарсене кĕртеççĕ

Йĕтĕрне. Районра чи малтан Мăдакинскри „Коммунизм" колхоз колхозниксене 1937 çулхи ĕçкунĕсем тăрăх тырпул валеçмели плана çирĕлтетрĕç.

Колхозра пурĕ 12342 ĕçкунĕ тунă. Ĕçкунĕсем çине пумай тĕшшăй тивет. Кунсăр пуçне ĕçкунĕсем тăрăх çăм, уйăмсем, арпасем тата 1 тенкĕ те 26 пус уçса валеççĕç.

Кăçалхи тырпул тухăç иртнĕ сулхинчен 3 хут ытларах тивет.

Вăйăл тырпул туса илни хăй тĕлĕн килмен. Колхозниксем вăйăл тырпул туса илесшĕн сахал мар кĕрешрĕç. Агротехникă хушшă пек ĕçлесе пынине çеç средниечĕвăн шухăшĕ тата унăн тĕллевĕ мĕнре-ха? Çак ыйту çине ответ пиччен малтан, Англипи консервативлă пичет Китайпа Япони хушшинчи сыхăнăва мĕнле хак пани çинче чарăнса тăмала. Ку тĕлĕппе Англипи консервативлă палла хăçатсенчен пĕри „Таймс" сыри питĕ характерлă. „Таймс" Японни империалисĕсем пурăнчĕ ытла „Ваншы патне çул уçасшан" сунăнине, урăхла калаçсан, Ăйгли интересĕсем нумай çĕре, центрти Китайа, çул уçасшан сунăнине питĕ дайăх пĕлет. Анчах та, „Таймс" Японнине Желтăва шыврăн иртерĕсе йăрасшăн мар. Япончăсем çак тĕле çитичченех Китайпа киленесе тăпăлсан, ку вăл перемири çеç пулнă пулĕччĕ, çакăн хыççăн вара Китай вихăçанхиннех ытла пĕрлешесе, малала хăйĕн вăйне пуçтарса çапăçма хатĕрленĕ тесе шутлат хăçат. Китайăн Японнине ăнрĕсе вăйĕ йумăхри пек вăйлă, вăл унпа пĕрремĕш хут ӳсă курĕ тесе йышăнат. Хăçат „Таймс" малала çапла çырат: Брюссельри конференцин малашлăхĕ шанчăклă тесе калама çук. Японнине Китай хушшинчи ĕçе ытти государствăсем хутшăма хатланинне Японни хирĕç тăнăçлăхпе çĕнĕрен çĕнĕ вăл малтанхи систерчĕ. Китай хăйĕн территорине пĕтĕмлĕхĕпе кĕрешме хатĕр тăнине кăтартрĕ. Китай халăхĕн шухăшĕ те, Китай правительствин халăх политики те Японнине усăлма мар условисемпе мир тăвасси çинчен шухăшлаттарраççĕ".

Брюссельри конференцинчен нимĕнех те кĕтме çукки çинчен калаçса, „Таймс" Китайăн Японни умĕнче чакмалла тесе систерме катăланса, посредничествăй идейи патнелле пырат.

* * *

Буржуазли-демократлиĕ державăсем хирĕç тăман пирки агрессорсем ирĕнсе кайаççĕ. Италипе Германни фашизма правительствисем Фрэнко вăрăм çар, çар хатĕрĕсем нумайăн вăрçа тăнă, интервентсем республикăлă Испанни çарĕ çине сĕнĕрен тапăнма куçа-кĕретĕн хатĕрленĕç, Испанни кантăрти çырăнĕсене хĕçпăлаллă вăй тата хĕçпăлшăл нумай антарнă, Португалли—пăлăхăçăсен снабжени ăнланчен—пăлăхăçăсемпе интервентсем вăрăм вĕçи-хĕррисĕр хĕçпăлшăл турттарнă вăхăтра, Англипе Франци тата буржуазли-демократлиĕ штат державăсем Лондонри комитетра „хутшăнмама мар" политикăна хутлевĕ пек, Итали хăйĕн çăрĕсене Испанирен илсе тухма хатĕрни çинчен калавине тимлĕнех йышăнăнăпа пек катартаççĕ.

„Хутшăнмама мар" комитетри çĕнĕ калаçусем интервентсене Испанине хĕçпăлаш тата çăр йăма вăйăт туса панăç. Пĕтĕм ĕç, Англи тата унпа пĕрле Франци государственăсем Испани çĕнĕ чăваннех хутшăнасшăн марринче тăрат. Англи интервентсем пулăшнине Франко генерала çийеле калаçасшăн, кайран вара сав интервентсемпех Англи капиталĕн Испанири интересне сыхласа хăваласшăн.

Çавăнпа та Англи çакăн пек хутшăнмала мар политикăна тытса пырат. Анчах та Англи дипломатийĕ çапла шутлама май пачĕ ĕç: Паллах, унăн Англири консервативлă хăçат-журналсем Англири министрсен совечĕн председательĕ Невил Чемберленăн çăмăл аллине çакнашкал лозунг кăларса тăратрĕç: Санкци мар, а посредничествă. Çак лозунг кăларса тăратрĕç: Санкци мар, а посредничествă. Çак политикăна тытса пырсан, Англи Испанине Германи фашизмăн ăçтăлăхĕнчен хăтăлтарма пултарайман. Ăçтăлăхĕнчен хăтăлтарма пултарайман.

Тĕнчери лару-тăрува пăхса тухни

Капиталисăмла тĕнчери биржăполитикăла çанталăк мĕнле тăнине кăтартакан барометр пулса тăрат. Пайан çак барометр çил-тăвал çывхарса килнине кăтартат. Англири авторитетлă журналсенчен пĕри „Экономист" çырат: „Америкăри континентсен ӳрăм пайĕсене шута илмесен, ниçта та пĕр страховой компани те... вăрçă хăрушлăхĕнчен мĕнле те пулин çурта страхлама-килĕшмест".

Çак факт мĕнле вырăнта тăни пуринпĕн те палăл: биржа вăрçа хирĕç гаранти памаст. Биржă варçа чĕртсе йăраканскен планăсем çинчен лайăх пĕлсе тăрат, вăл Франко генерала кам укçа-тенкĕ парса тăнине, кам ăна салтак, вăрçă техникине хĕçпăшал парса пулăшнине, Германи фашисчĕн йăнăл планне, Италин войăсыпчинин çăвартинне лайăх пĕлет.

Агрессивлă государствăсем активланасăн пырăççĕ. Рим хулинче вăрçа пуçламали çĕнĕ документ çине алă пуснă. Италинне Германни тунă „Коминтерна хирĕçне" килешӳ çумне Италин те сăлтăçă. Çав килешӳ—вăл виçĕ государствă пĕрле пуçса вăрçă сойузĕ тунипе пулат. Çапла вара виçĕ агрессорăн—Германи, Италин, Италин государственăсем сойуз тунă çинчен официаллă пĕлтерĕç.

Вăрçă пуçланан государствăсем хăйсен çĕнĕ каварлашуне „Коминтерна хирĕçне" сăлтавпа витнине хăтланаççĕ. Хăйсен ураççăршывсене тургса илес тĕлĕшпе тунă планне пытарма, вĕсем коммунисăма хирĕç кĕрешес лозунгпа усă кураççĕ. Вĕсем Германи—Япони—Итали пĕрле тунă килешӳ Совет Сойузне çеç хирĕç тăрат тесе буржуаль-демократлиĕ государственăсене ĕнентерме хăтланаççĕ. Совет Сойузĕ сакна асрах тытат, вĕсенчен ниçĕçлĕ вывăдсем тăват. Хăй вăхăтĕнче Япони Германи сойăуз тунă хыççăн, Совет Сойузĕ Япони пуçлă тытмали килешӳ тумарĕ. Халĕ те ССР Сойузĕн Италири полпречĕ Итали правительствине Итали—Германи—Япони пĕрле тунă килешӳ ССР Сойузĕне Итали хушшинче ку тăрăвчен тунă договорсене хирĕç пырат тесе пелтерĕç. ССР Сойузĕне тунă договăрсене пăсни Италипĕн усăлă марăпне хăйĕн ĕненме пултарат.

Анчах та çак виçĕ государствă тунă килешӳн пĕтĕм вăрттăнлăкĕ Совет Сойузне хирĕçле пулиннине çеç мар. Япони Германи сойуз тусан, Англипе те, Америкăра та çак сойуз чи малтан Англипе Америкă интересĕсеммĕн хăрушă пулнине уçсанах йышăначчĕ. Халĕ ентĕ çак договор çумне Итали çыпăçни Англи, Америкă, Франци интересĕсеммĕн пушшех те хăтлăх хăруша пулат.

Çак çĕнĕ килĕшĕве Итали пуçарнипе тунă. Итали Совет Сойузĕ çине тапăнма шутлат-и, çакна тума йăна Японни пулăшăвĕ кирлĕ-и? Италин планĕсем урăхла: вăл Сурçĕр Африкăна тургса илсе, Вăтăçĕр тинĕсĕнче хуçа пулма ĕмĕтленет. Итали фашисчĕсĕ Англи тата Франци колонисене валеçме вăрçă пуçласан, Японийĕе хăйĕн сойузникĕ тăвăсшăн. Çапла вара Японнине Германи тунă сойуз çумне Итали çыпăçни Англине Францишĕн пысăк харушлăх пулса тăрат. Японни агрессĕрсемне блок туса хăйĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи позицине çирĕлетме шутлат. Кам шучĕпе? Паллах, чи малтан, Англипе Франци позицисене вăйсăрлатса, позицине çирĕлтетесшĕн.

Фашисла агрессăрсем никама та улталаймарĕç. Агрессăрсем тунă килĕшӳн чăн-чăн шухăшне пурте лайăх ăнланнă. Тĕнчери хăçат журналсем Японни—Германи—Итали государствисем тунă килешӳ коммунисăма хирĕç мар, вал Англине Францине хирĕçле килешӳ тесе сырăççĕ.

Çак виçĕ агрессăрлă государстваш тунă блокăн вăйĕ пысăк мар. Анчах та вĕсем буржуазли-демократилĕ государствăсем агрессине ирĕк панине пула сойуз тума пултарчĕç. Агрессăрсен блокĕ хăрушă сигнал, ăна миршĕн тăракан пур çĕршывсем те пĕлсе шута илмелĕ. Çак фронта хирĕç миршĕн тăракан çĕршывсен пĕрлех фрончĕ тумалăх. Англипе Франци çакна ăнвартрах ăнланса илсен, миршăн кĕресесси тата ытларах вăйланаç.

* * *

Китайра ĕç мĕнле тăрат-ха? Англири консервативлă „Сендей Таймс" хăçата сăмах парăнăр. Çак хăçат Японийĕе хирĕç тăрат тесе шанмăсăр тăма çук. Хăçат çырат: „Çурçĕр Китайри Китай çăрĕсемпе партизансен отрăвăчĕсем Японни çăресен тылне питĕ ытла килентересçĕ. Японни çарĕн командирĕсем фронт тăрăх вăрăма тасалма пикри, ăна сыхлама йăвăр пирки, хăйсен чăсĕсене кайала илсе кайăсси çинчен шутлаççĕ. Китай авиацине инициативăна хăй аллине илет. Китай авиацийĕ сывлăшăран сотăпăнипе Японни транспăртĕсене çурĕме пĕрмайăх чарасçĕ. Манчжурирен те вырăнти халăхсем пăлханни çинчен пелтересçĕ. Таҫҫисинран Муклена 13 пойăс çинче Йапони салтăкĕсем йăнăш çинчен пĕлтересçĕ. „Дейли экспресс" хăçат Китайăн 8-мĕш çарĕ вăйлă çапăçнă май, Японни çарĕн 50 пин салтакĕ питĕ йăвăр положенире тарса йăлă тесе çырса пĕлтерет.

Китай çарĕсен вăрçа хатĕрĕсем Японни çаренчен питĕ кайа пулин те, Китай çарĕсем ăна Японийĕе хирĕç вăйлăн тăни, Шанхай хулине паттăрăн хӳтлени—Китай халăхĕ Японни агрессине хирĕç кĕрешме хатĕр тăнине кăтартаççĕ.

Мира йăратакан текен буржуазли-демократилĕ державăсем Японни захватничĕсене чарас тĕлĕшпе мĕн тăваççĕ-ха? Вĕсем Вашингтони договор çине алă пуснă 9 государс ăна представительĕсĕсен конференцине Брюссельре пухрĕç. Çак договор çине алă пуснă государственăсем, çав шутрах Японни те, Китайăн территорине пăсмала мар, унăн суверенитечĕне тата вăл ирĕкăна пăхăнса тăманнине хиçепленеме тесе килĕшнĕ. Брюссельри конференци, вăл агрессине хирĕç тăтăкланăнăх кĕресес çул çине тăнă пулсан, палла вырăнта пулмаллаччĕ. Японни конференцине пулма килĕмерĕ. Япони агрессăрсĕрсем хăйсем Китай çĕршывне турăса илнине нимĕнле сăлтавпа та тĕрĕсе калама пултарайманнинне питĕ лайăх пĕлеççĕ. Японни империалисĕсем Англи 1931 çулти пекех Японни агрессине хирĕç нимĕнле таккăл ĕç те тăвас çуккине питĕ лайăх пĕлеççĕ.

Англи дипломатийĕ çапла шутлама май пачĕ ĕç: Паллах, унăн Англири консервативлă хăçат-журналсем Англири министрсен совечĕн председательĕ Невил Чемберленăн çăмăл аллине çакнашкал лозунг кăларса тăратрĕç: Санкци мар, а посредничествă. Çак политикăна тытса пырсан, Англи Испанине Германи фашизмăн ăçтăлăхĕнчен хăтăлтарма пултарайман. Ăçтăлăхĕнчен хăтăлтарма пултарайман.

Йулашки 4-мĕш страницăра

Иутĕршывсенчи рабочисен делегацийĕсем Мускавра

Совет Союзне Октябрьти Социализмăна Аслă революцин сиремĕн çул тултарнине уйăрлама килнĕ йутĕршывсенчи рабочисен делегацийĕсем СССР Сойузĕн столицин пурнăçĕпе тĕплĕн палăшаççĕ.

Делегатсем пурте пĕр хаваслăн кăлăхлă тăрăх, Октябрь революцин сиремĕн çул тултарнă йăтна пысăк тĕлĕтăрта пулса иртнĕ чăплă ларту тата Хĕрлĕ площăдре нойабрĕн 7-мĕшĕнче пулнă парадпа демонстрацин вĕсене питĕ кăмăла кайнă.

Йутĕршывсенчен килнĕ хăнасем Ленин музейĕнче, Мускаври нумай предприятисенче, государствăн Третьяковски галлерейĕнче, метрополитенра пулнă тата ССР Сойузĕн Горьки ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ Художествăн Академилĕ театрта „Земля" йăтлă спектакльпа курнă.

Нойабрĕн 16-мĕшĕнче йутĕршывсенчен килнĕ рабочисен делегацийĕсем ССР Сойузĕ тăрăх курса çуреме тухса кайаççĕ. Вĕсем Бакура, Севастополь, Киевра, Харьковра, Дон-çи Ростовра, Сочире, Кисловодскра, Днепрогесра тата Ленинградра пулаççĕ.

(ТАСС).

Челябинскри трактор завочĕн дизĕллĕ тракторĕсене испытани туни

Государствăн комиссийĕ Челябинскри трактор заводĕнче дизĕллĕ тракторĕсене испытани тувине малтанлăха пуçтă илсе тухнă. Испытанийĕ хăмăр сухалăсене тата хăмăла йăшăх сухалăнине тепĕр хут сухаласа туса иртернĕ. Тепĕрмине 1,500 гектар сухаланă.

Испытани туни дизĕллĕ çĕнĕ тракторăн пысăк экономи пайăнне кăтартнă. Ку трактор пĕр лаша вăйне ĕçлесе пĕр гектар сухалама 210—220 грам çунтармалли йăпаласем пĕтерет. Челябинскри трактор завочĕ калăпăлăнтарнăлă трактор 305 — 315 грам пĕтерет.

Сĕртмене 20—22 сантиметр тарăнăш сухалама чухне дизĕллĕ трактор пĕр гектар сухалама 10,5—13,8 килограм çунтармали йăпаласем пĕтерет; лигроинлă трактор çавăн пек сухалăнă чухнех 19—21,9 килограм пĕтерет.

Дизĕлле трактор лигроинли пекмар йăнĕрех йăпалапа ĕçлет. Машинпа трактор станцисем тата совхозсем вăйла тратор паркĕсене, хăш-пĕр пайĕсене дизĕллĕ трактор çине кусăрган çунтармали йăпаласене пысăкăн перекетлет тата çĕре ĕçлессине йĕнетет.

Дизĕллĕ трактора лигроинлипе танлаштарсан, вăл питĕ пысăк туртăкăн вăйлă тата пысăк ĕçтуçăçлĕ пулни курăнать.

(ТАСС).

18,9 тоннă хурçа

СТАЛИНО, нойабрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Сталинри металлурги заводĕнчи иккĕмĕш мартен кăмаки ячĕпе ĕçлекен сталевар Бурцев йулташ, йăтлă сталевара Макар Мазайпа амăртăсем, нойабрĕн 12-мĕшĕнче халиччен пулман рекорд тунă. 147 тонна йăвăрĕш плавкăна 5 сехет те 23 минутра шăратса, вăл кăмака тĕпĕнчи кашни тăватăкал метртан 18,9 тонна хурçă илнĕ (мартенăн техникăлă пултарулăхĕ—7,7 тонна).

Кĕр тырриссне 36 мĕлйун та 41 пин гектар çине акнă

Нойабрĕн 10-мĕшне Совет Союзăнче кĕр тырриссне 36 мĕлйун та 41 пин гектар çине акса плана 97 процент тултарнă. Пучăлла тырă-сене 75 мĕлйун та 259 пин гектар çинчен çапса плана 83 процент тултарнă.

Кĕркри çĕртме сухаламали плана 66 процент тултарнă. Пĕтĕм Совет Союзĕнче 46 мĕлйун та 646 пин гектар сухалаланă.

(ТАСС).

МУСКАВ, нойабрĕн 11-мĕш (ТАСС). Косарев йăчĕпе тăракан Тĕп Аэроклуб Пĕтĕм Тĕнчери Авиаци Федераци (ФАИ) Президиумĕнчен Гризодубова Валентина Ивановăртăн вĕçнисен резюмăчĕсене пĕтем тĕнчери рекорд тесе йышăнни çинчен пĕлтернине илнĕ. Ку вĕçесене Гризодубова Октябрĕн 7-мĕшне 9-мĕшĕнче тунă.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче Гризодубова Валентина А. С. Йаковлев инженер-конструкцине тунă „УТ-1" пĕр çын лармала самолётпа 100 километрлă участкăра вăтăм хăвăртлăхпа пĕр сехетре иккĕр вунсакăр километр вĕçнĕ. Октябрĕн 9-мĕшĕнче вăл Екатерина Слобоженко техникпа пĕрле „УТ-2" çăмăл гидросамолётпа пĕр сехетре икçĕр километр вĕçнĕ.

СОВЕТ СОЙУЗĔ ТĂРАХ

★ Оптикăла (витĕр курăнакан) гипе кăçарăнă ССРСойузне йутĕршывсенчен кĕрсе тăнă. Кăçал Таджик СС Республикинче оптикăла гипе кăларма пуçланă.

★ Горький хулинче наркомкоз приказĕ тарăх трамвайчăкисем вăлăн çăмăл формăлă тумтир тунă. Октябрь праçникĕ тĕлне пурĕ 500 трамвайчăк çĕнĕ формă тăхăннă. Трамвай управленийĕ нойабрĕ уйăхĕнче трамвайчăкисене пурне те çĕнĕ формăлă тумтир пама палăртнă.

★ Йĕтĕр тăвакансем кăçал пысăк тупăш илеççĕ. Калинин облаçĕнчи „Новая жизнь" колхоз членĕ Илйа Иванович Фидатов кăçал 10 пин тенкĕ укçан, 250 пăт тырă, 300 пăт çĕрулми, 90 пăт пахча çимĕç илет. Перекеевка Илйина пĕчĕк ĕçлесе 90 пăт тырă, 120 пăт çĕрулми, 3.500 тенкĕ укçа илет.

✪ Рыбинскра Павлов йăчĕпе тăракан завод сумĕнче куçтурă çурчĕ уçнă. Унта 1.500 çын вырнаçмалăх театр залĕ, физкультурă, таша, вулав залĕсем тата ыт. те пур.

✪ Минскра совет музыкĕн вунăкунлăхĕ пуçланнă. Вунăкунăх Белорусси столицин ĕçсăмпинче республикăри совет композиторăсĕн чи лайăх произведенийĕсемпе тата кĕрше республикисенни композиторсĕмпе палăштарать.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Республикинчи Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Артемий Васильевич Васильев йулташа, вăл урăх ĕçе кусă пирки Чăваш АССР Республикинчи Шалти ĕçсен Халăх Комиссариначĕ сумĕнчи Ошсодор начальникĕнĕн заместителĕ ĕçĕсченех хăтарнă.

* * *

Чăваш АССР Республикинчи Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Павел Михайлович Йатмасов йулташа Чăваш АССР Республикинчи Коммуналă Хуçалăх халăх комиссарĕнчен заместителне лартнă.

* * *

Чăваш АССР Республикинчи Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ А. К. Назарова Чăваш АССР Йустици Халăх Комиссарĕнчен кăларнă.

Румыни правитĕлствин отставки

Бухарестран Татареску пуç пулса тăракан Румыни правительстви отставкă панă, тесе пĕлтерĕççĕ.

Румыни королĕ национал-царанистсен (хресченсен) партин лидерне Михалана „Румыни Фронче" йăтлă фашисла ушкăн лидерĕ Вайда-Войводпа пĕрле çĕнĕ правительствă йĕркелеме хушнă.

Национал-царанистсен партин Тĕп Комитечĕ Вайда-Войводпа пĕрле кабинет йĕркелеме килĕшмен.

(ТАСС).



Куславкка комбинатĕнчи пуçламĕш шкулпа ФЗУ çурчĕ.
Цыганов фото-ĕçкернĕкĕ.

Укçа-тенкĕ планне Чăваш АСС Республикинче мĕнле тултарса пынине кăтартакан СВОДКА (IV-мĕш квартăл, нойабрĕн 11-мĕшне)

Район ячĕçĕм	Плана тултарнă (процентпа)
Вăрнар	42,8
Трак	42,7
Шупашкар хули	42
Сĕнтĕрвăрри	40,8
Тутаркас	39,1
Кувакки	38,8
Йĕтĕрне	38,2
Пăрачкав	38
Канаш	37,5
Шăхасан	36,4
Куславкка	35,7
Çĕрпÿ	35,6
Елĕк	34,8
Çĕмĕрле	34,2
Йĕлчĕк	33,3
Йĕпреç	33,1
Турхан	32,6
Шăнкăртам	32,2
Улатăр хули	32
Тăвай	31,2
Хĕрлĕ Чутай	31,1
Вăрмар	30,1
Улатăр	29,4
Патăрьел	29,2
Шăмăршă	25,9
Ишлей	25,8
Шупашкар	23,1
Пĕтĕмпе	34,4

Йугославин тата фашисла агрессăрсен пĕрлешÿвĕ

Йугославин хăçачĕсем Йугославин „Коминтерна хирĕçле" текен фашисла агрессăрсен пĕрлешÿвĕ сумне пĕрлесмест, тесе сыраççĕ.

„Словенец" хăçат Йугославин кирек йепле те пулин пĕрлешÿ сумне çыпçăнасшăн мар, тесе сырать. Йугослави, тет мĕлала хăçат, пĕтĕм аслă державăсемпе лайăх пурăнинне сыхласшăн, çавăнпа та вăл „Коминтерна хирĕçле" килĕшÿ сумне пĕрлесмест, хăй те мĕнле çĕ (формăлă германи-итали-йапони пĕрлешÿне кĕрсе кайасшăн мар.

„Ĕко де Белград" хăçат германи-итали-йапони пĕрлешÿвĕ тĕнчери политикă пĕр пек лăпкă тăнăçлăха пăсасшăн, мĕншĕн тесен вăл пĕрлешÿн планĕсем Францине Англи интересĕсене хирĕçлессĕ, тесе сырать.

(ТАСС).

Йапони авиацийĕ тапăнни

Нанкинран: Йапони авиацийĕ çаплах Китайăн мирлĕ хулисем çине тапăнать, тесе пĕлтереççĕ. Нойабрĕн 12-мĕшĕнче йапонăсен самолётĕсем каллех Уси хули çине бомбăсем пăрахнă,—Уси хули вăл Нанкин—Шанхай чукунçулĕ çинче. 14 самолёт вĕçсе пынă та, Уси хули çине çирĕм бомба пăрахнă.

Хуаншаньдиань çине те çирĕм бомбă йăхăн пăрахнă (Хуаншаньдиань—Шаньдунь провинцинче, Цзинаньрен сакăр километрта).

Лунхай чукун çулĕ çинчи Лицйуань станци патĕнче, бомбăсем пăрахса, чукунçулăн полотнине аркатăй.

Нинбора нойабрĕн 12-мĕшĕнче йапонăсен пăрахнă бомбăсем çурăлнине 90 çурт ишĕлсе аннă. Хулара пурăнаканысем çĕр çын ытла вилнĕ тата аманнă. Çăйăх хулинче (Чжецзйан провинцинче) 200 çурта йăхăн ишĕлсе аннă. (ТАСС).

Йулашки пуçтăран

Политикăла тимсĕрлĕх

Рабочисемпе, хресченсен-социалисăмла государствăн Конституцине ССР Сойузĕнчи Советсен VIII-мĕш Чрезвычайлă съесĕнче 1936 султи декабрĕн 5-мĕшĕнче çирĕлетнĕç Çакна пĕлмен çын Совет Сойузĕнче çук, ăна кашни пионер пĕлет. Анчах та, Иетĕрне районĕнчи „Колхозник йулташĕ" хăçат, унăн редакторĕ Лазарев йулташ ăна пĕлесшĕн мар. Ку çеç мар, хăçат редакторĕн политикăла тимсĕрлĕхне пула хăçат кунăсăр-кĕрткĕн çоçета хирĕçле, тăшмана усăлă ĕç тăвать.

„Колхозник йулташĕ" хăçат нойабрĕн 7-мĕшĕнче (103-мĕш номĕр) „Капитализăмла патшалăхсенчи хресченсен пурнăçĕ" йăтлă статйа пичĕтлесе кăларнă. Темĕнле сăлтавпа хăçат ку статйана Сталинла Конституцине çирĕлетнинчен пуçланă. Анчах хăçат редакторĕ Сталинла Конституцине ССР Сойузĕнчи Советсен VIII-мĕш Чрезвычайлă Съесĕ мар, такăм çирĕлетнĕ пек кăтартасшăн. Статйана çыраканĕ (унăн йăтне кăтартман) тата ăна пăхса пичете йăраканĕ редактăр Лазарев тунă йăпăн „Колхозник йулташĕ" хăçат редакцинче ĕç питех те йĕркелĕ марри çинчен калать.

Японире 600 горҫăк пĕтнĕ

ТОКИО, нойабрĕн 13-ш. (ТАСС). Нойабрĕн 11-мĕшĕнче Гумма тата Нагано префектурăсен (облаçсен) чиккинче сăрт шавăнса йăтăнса аннă. Инкек мĕнле пулни çинчен тĕплĕн пĕлтернисене тата сăрт шавăнса аннă пирки калама çук нумай çын вилни çинчен мĕн пур хăçатсем çырса пĕтереççĕ. Шавăнса аннă сăрт горҫăксем пурăнакан Коидзума йăтлă йала аркатса такнă, кÿкĕртне пăхăр шахтинчен тухмали çул питĕрнисене марăа тата 350 çурт ишĕлнĕ. Хăçатсен шухăшлĕпе, шахтă сывăхĕнчи тар склаче тивсе сиксе кайнипе 600 горҫăк пĕтнĕ. 200 горҫăка чĕрĕлех шахтăна питĕрсе лартнă пулă, тесе шухăшлаççĕ. Инкек пулнă районпа телефон урлă сыхăну тытасси чăрăнса ларнă.

ТЕМТЕПĔР

Куçа курăнман очки

Америкăнçăксем куçа курăнман очкисем тăхăнса çÿреме пуçласçĕ. Сĕмĕрлĕм кĕленчерен тунă ăнсăртран линзăна куç хупăхпи айне кĕртсе лартаççĕ, кайран вăл ун сумне çыпăçах кайать. Çакăн пек очкисем куçа часрах тÿрлетеççĕ тата спорт вăйăнсене выляма, кĕреçме, парашÿтпа сикме те чăрмантармаççĕ.

(„Техника молодежи").

* * *

Хунар вырăнне—утатакан хут

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче фотолабораторисенче хунар вырăнне усă курмали утатакан хутсем сутма пуçланă. Хутăн пĕр ĕнне, стĕна сумне сакма аван пулăтăр тесе, силĕм сĕреççĕ, тепĕр ĕнне фосфоресциле сийпе витеççĕ. Хутсем хĕрлĕ тата симĕс çутă параççĕ. Хутсем çĕрлĕ пластинкăсемшĕн те сийенлĕ мар.

(„Техника молодежи").

* * *

Сигнал памали прибор

Çăмăл промышленăçăх халăх комисăрначĕн âслăлăхна тĕпчев лабораторийĕнче станок çинче ĕçлекен стахановец вăлăн сигнал памали çĕнĕ прибор тунă. Кун пек прибор икĕ пайран тăрать: пĕр пайĕ, сигнал панине йышăнакан парачĕ, прораб патĕнче, сигнал паракан аппарачĕ—стахановец ĕçлекен вырăнта.

Çăкнашкал прибора бригадир-стахановец ĕçре материал, енерги, механисăмсем ситменни çинчен çийĕнчех пораба рат. Приборпа усă курмали майсем питех пĕлтерре простой пулассине сирме пултарат. Приборпа усă курмали майсем питех çăмăл.

(„Наука и техника").

* * *

Хурăн сĕткенĕнчен—ерех

Свердловскри вăрмăн-химии станцийĕ хурăн йăвăç сĕткенĕнчен шурă ерех тума пуçланă. Пахалăх ĕçенчен „хурăн ерехĕ" виноград ерехĕнчен кайа мар. Малтан туса кăларнă 12-пин литрне вырăнти магазинсенче часах сутса пĕтернĕ.

1938 султа çăкăн пек ерех 750.000 литр туса кăларма палăртнă.

(„Краматорская правда").

Театр

Капитализăм йĕритавралăхĕ çинчен манмала мар

(Иккĕн пĕр тăван Турсемпе Шейнин çырнă „Очная ставка" пиесă Чăвашсен Государствă Академи театрĕнче)

„Капитализăм йĕритавралăхĕ ниçта та çитмен çăмăл мар, вăл чăнах та пур тата вырăмар ĕлпала. Капитализăм йĕритавралăхĕ вăл—акă мĕне пĕлтерет: пĕр çĕршыв, хăйĕн патĕнче социализăмлă йĕркеллĕ туса хунă Совет Сойузĕ пур, тата, унсăр пуçне, нумай çĕршывсем, халĕте капитализăмлă йĕркеллĕ пиракан, Совет Сойузĕ йĕритавра тăракан, ун çине тапăнма, ăна çĕмĕрсе тăкма ĕе, мĕн пуласан та—унăн хăватне ханшатма тата ăна вăйсăрлатма мăй кĕтсе тăракам буржуалă çĕршывсем пур" (Сталин).

Парти Тĕнкомĕн февраль-мартри Пленумĕнче Сталин йулташ: „Капитализăм йĕритавралăхĕ пур чухне пирте йутĕршыв государствисен агентăçĕсем пирĕн тылсене йăрса тăракан сăтăрăçем, шпионсем, диверсантсем тата сывлăлеркеçем пулĕç" тесе калаçрĕ.

Чăвашсен Государствă Академилĕ театрĕн вырăс труппи выляса панă „Очная ставка" пиесă пиро капитализăмăн йĕритавралăхĕ çинчен астуратать те ĕнтĕ.

Спектакльĕн прологĕнче Гестапо (Германири вăртăлăн полици) шпионсем вĕрентсе кăларакан шкултă çĕнĕ „кадресем" хатĕрленине кÿратăр. Гестапо хăйăн шпионĕсене диверсилĕ, сăтăрçăлă ĕçлесем тума Европăна Африкăра çĕршывсем тăрăх салатать. Шпионсем Франции, Чехословакине кайаççĕ. Вĕсенчен чи тăрăвулă, 1-мĕш номĕрлĕ шпион Совет Сойузне килет. Совет Сойузĕнче Ивай Иванч Иванов хушаматлă сынăн паспăрчĕне килекен шпион, шкул начальникĕ калаçă тăрăх, ССР Сойузăнчи йăласене питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ, вырăс чĕлхине Достойевскинчен кайа мар пĕлет, çулпуçсен докладĕсене тата парти çĕнĕсем решенисене пăхмасăр калама пултарать". Çакна вĕсем, диверсилĕ ĕçсем тума çăмăлтарах пултăр тесе, совет общественăçĕ умĕнче „хамăр çын" пек курăнасшăн, шанчăка кĕресшĕн тăвасçĕ.

Шпион Совет Сойузĕнче троцкисла ушкăн пулăшнипе нăр авиаци заводне управлени пулса ĕçлеме вырнаçать. Пĕр фашисла государствăн Совет Сойузĕнче пурăнакан палла агентĕ, хăйĕн пĕтĕм сăмăр тăршшĕнче çав государствăн шпионăк шпионаж пухăвне туса пурăнаканскер, ăна диверсилĕ задани парать. Разведка агенчĕ Коллор, ватă инженер, пĕр учреждение счетоводра ĕçлет, Ганкин хулпуççăна пурăнать. Хăй чикĕ урăх каçса каймă тăрăсах, Толстых колхозник (артист А. Йудин) тытса, ăна совет пограничникĕсем алликке парать. Старик—Ганкин счетовод, вăлах Коллор, ăгедоватăл умĕнче. Следоватăл тимлĕ тĕнчесен те, шпион хăйăн чăн-чăн сăн питне уçса параспăй мар. Ларцен следоватăл шпионăк сăмахне сутăç-сомăн çутот. Пулашкинчен старик хăй шпион пулнине йышăнать, анчах йулташĕсем çинчен пĕлтермест.

Иван Иванч Иванов хушаматпа управленин пулса ĕçлекен çынăрăк диверсант авнăн заводĕнчен çар самолётăн секретлă чертожĕсене вăрласа, чикĕ урăх каçса тарма хăтланать. Пограничнике перçе вĕлерет вăл, анчах хăйне те амантаççĕ. Диверсанта тытăç. Унăн сумĕнче заводран вăрланă секретлă чертожсем тупаççĕ.

Следстви органĕсем, пирĕн тăван сĕршывăн ĕççынниссем, çуламăл патриотсем —çĕвĕçем, студентсем, колхозниксем, врачсем, пограничниксем тата ытти пулăшнипе, диверсантсен организацине шыраса тупаççĕ. Гестапо планĕсем çакăнса кайаççĕ. Буржуалă разведка крăнисра. Совет контрразведки тĕрекленсе, вăйланса шырать.

Тăпăнан чейо. Ĕлĕк çăвара карса лăпсан, политикăла сыхăлăха мăкатсан вăл пысăк сăтăр ĕçмĕ пултарать. Çавăнпа та капитализăм йĕритавралăхĕ çинчен асра тытăр! Большевикла сыхлăха вăйлатăр!—сакăн пек вывăд тухса тăрат „Очная ставка" пиесăна курсан.

Артисесем выляннине питех те мухтамала. Старик ролĕпе выляхан Б. И. Прядин артис каснă-лартнă ватă кашкăр-шăн сăн-сăпатне уçса парат. С. П. Гондов артист Ларцен следоватăлĕн ролĕпе çав тери паха выляре. Çак ролуе артист хăйĕн пĕтĕм талантне катартса панă. Студент (артист Малинин), Лавренко (Дубинин), Гуровин (Мартагин), Ручйов врач (Ольгин), Харитонова (В. Павлов) Павлецкий (А. Мудров) врачсен ролĕсем те питĕ уçăмлă та тулли тухрĕç. Тÿрех каламала, пиесăра начар выльăхсем артисесем пулмарăç те.

С. Константинов.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Сăтăрçăсем йăва çаварна"

1937 сулхи октябрĕн 3-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хăçатра А. Захаров йăнкорăн „Сăтăрçăсем йăва çаварана" йăтлă заметкă тухнăччĕ. Заметкăра „Куçтурă" колхозра (Патăрьел р.) пурăнăх салтăрни, йухăнтарни çинчен сырнă.

Заметкăна вырăна тухса тĕрĕслене хыççăн, Патăрьел райкомĕн секретарĕ Павлов йулташ çапла пĕлтерчĕ: „Заметкăра сырнисем пурте тĕрĕс. И. Краснова комсомол комитет членĕнчен, комсомолтан тата шкултан та кăларăр. Унăн тăшманла ĕçĕсене тĕплĕн тĕрĕслеме районти милицин тытăмне хушнă. Вăтам шкулти комсомол комитет членĕсене çĕнĕрен суйлама. Йегоров комсомолец пирки комсомолецсен пухăвĕнче сÿтсе-явнă. Шкулта вĕренекен ачасем хушшинче дисциплинăй начăрлине шута илсе, комсомол комитетне шкулта политикăла воспитани ĕçне лайăхлатассине кăтартусем панă".

„Дисциплинăна йăпах"

Алексейев сырса пĕлтерне тăрăх, Пăва йăлĕнчи (Тăвай р.) вăтам шкулта вĕренекен И. Краснов йулашки вăхăтра политикă тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех пăсăлса кайнă. Шкулти комсомол организацийĕ начар ĕçленĕ пирки комсомолецсем хушшинче дисциплинăна йăпăлланă. Политзанятисене комсомолецсем йĕркелеç сÿремеççĕ. Член ÿкçисене вăхăтра тÿлемеççĕ. Йегоров комсомолец 5 уйăх хушши тÿлемен, занятисене сиктереç сÿрет.

Заметкăна вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, Тăвай райкомĕн секретарĕ Павлов йулташ çапла пĕлтерчĕ: „Заметкăра сырнисем пурте тĕрĕс. И. Краснова комсомол комитет членĕнчен, комсомолтан тата шкултан та кăларăр. Унăн тăшманла ĕçĕсене тĕплĕн тĕрĕслеме районти милицин тытăмне хушнă. Вăтам шкулти комсомол комитет членĕсене çĕнĕрен суйлама. Йегоров комсомолец пирки комсомолецсен пухăвĕнче сÿтсе-явнă. Шкулта вĕренекен ачасем хушшинче дисциплинăй начăрлине шута илсе, комсомол комитетне шкулта политикăла воспитани ĕçне лайăхлатассине кăтартусем панă".

Ответлă редактăр заместительĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăвашпотребсойуза
СТАЖЛĂ
Секретарь-машинистки
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ

Промкооперăци системин бухгалтери участокĕ ĕçĕсене пĕлекенсем
4 бухгалтер-ревизор
васкавлă кирлĕ
Условисемпе паллашма çак адреспа пымала: Шупашкар, Кадыков урамĕ, 7—9.
Телефон 73-3-22.
3—1 Чăвашкуçпромсойуз.

Шупашкарти „Красный мебельщик" артелне
СДЕЛЬНĂ ĔÇЛЕМЕ
Столярсем кирлĕ
3—1 Правлени.

Миçутинри хăма çуракан завода
МЕТАЛЛ ÇИНЧЕ ĔÇЛЕКЕН
токăр кирлĕ.
Адрес: Шупашкар, Атăл леш енче, Миçутин завочĕ.
Дирекци.

Чăваш АССР Çутăç Халăх Комиссариначĕ

Кăçалхи нойабрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарта шкул çулне çитмен ачасене воспитани паракан работниксене хатĕрлемели ÇУЛТАЛĂКЛĂХ КУРС УÇАТ. Курса тулливăр вăтам шкул программи чухлĕ вĕреннисене, 17 çултан иртнисене илеççĕ.

Çыйăвлăн çумне çак документсем кирлĕ:
1. Малтан вĕренни çинчен.
2. Хăш çулта çуралнине кăтартакан хут.
3. Сывлăх пирки свидетельствă.
4. Аса йĕслени çинчен справкă.
5. Икĕ фотокартăчкă.

Курсантсене стипенди тата хватер параççĕ.

3—2. Чăваш АССР Çутăç Халăх Комиссариначĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çыннăсем илмели хăвăрт: 12 уйăх—30 т., 6 уйăх—15 т., 3 уйăх—7 т. 50 пус, 1 уйăх—2 т. 50 пус. Аялăнăйăсене майлăн памаççĕ.

Уполномоченный Чувашлавлита № 863. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2870. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.